28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

ИЮНЬ 5 ЫТЛАРИКУН 107(6858) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм [illegible] пĕрлешĕр!

ВКП(б) [illegible] Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Халăхăн художествăллă пултарулăхĕ республика юбилейĕ умĕн

Республикăри ĕçсыннисем хамăрăн автономи юбилейне фабрикăсемпе заводсенче, колхоз уйхирĕсенче, çавăн пекех тата культура фронтĕнче те çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Халăх хушшинче хальхи вăхăтра пысăк çĕкленÿ палăрать.

Савăнăçлă халăх савăнăçлă юрăсем юрлать. Юбилее хатĕрленнĕ май халăхăн художествăллă пултарулăхĕ çĕнĕ ÿсĕмпе çĕкленсе пырать. Нумай тĕрлĕ пултарулăх коллективĕсем, пултаруллă уйрăм çынсем республика 25 çул тултарнă ятпа пулса иртекен олимпиадăна хутшăнма хатĕрленеççĕ.

Пирĕн ирĕклĕ те телейлĕ халăх искусствăна пĕтĕм чун-чĕререн юратать. Искусство халăхшăн уявсемпе праздниксенче кăна мар кирлĕ. Пирĕн халăх искусстви ĕçсыннисене ĕçпе кĕрешÿре хавхалантарса пырать. Авалхи чуралăх саманинче те халăх хăйĕн савви-юррисене, халлапĕ-юмахĕсене ĕмĕртен-ĕмĕре сыхласа, пуянлатса пынă. Ваттисен сăмахĕ каларĕшле, «чăваш кĕнекине ĕлĕк-авал ĕне çисе янă» пулсан та, унăн пуян творчествине патша саманин çав «выçă ĕни»-çисе яма пултарайман. Мĕншĕн тесен, халăхăн тепĕр халлапĕ каланă тăрăх, «чăваш хăй юррине сĕм вăрманти вата юман хăвăлĕнче пытарса усранă». Çав юрă хурлăхлă юрă пулнă, ăна чăваш çынни, чи йывăр самантсенче юман хăвăлĕнчен кăларса, никам итлемелле мар шăппăн юрланă. Çапла вăл хăйĕн чунне йăпатнă, çав юрăпа унăн çутă ĕмĕтсем çуралнă.

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци чăваш ĕççыннийĕсене ирĕке кăларчĕ. Чăваш юрри те ирĕклĕ совет саманинче юман хăвăлĕнчен тухса тĕлĕнмелле илемлĕн те савăнăçлăн янăраса кайрĕ. Çак юрра пирĕн аслă çĕршывăн столици — Мускав та илтрĕ. Пирĕн халăх искусстви ирĕклĕ çĕр çинче çултан-çул вăйлăн ÿссе, чечекленсе пычĕ.

Фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç тăватă çул яхăн пынă хаяр вăрçă та халăх искусствин ÿсĕмне пÿлсе лартмарĕ. Пачах та урахла, халăх хушшинче ирсĕр фашистсене ылханса питлекен сăвă-юрăсем, халлапсемпе юмахсем, ваттисен йĕплĕ сăмахĕсем çуралчĕç. Пултарулăх коллективĕсен репертуарĕсем ĕççыннисене кĕрешÿпе ĕçе хавхалантаракан юрăсемпе пуянланчĕç.

Республикăри икĕ пине яхăн шутланакан художествăллă пултарулăх кружокĕсем халăх хушшинчи талантсене пăхса çитĕнтерес тĕлĕшпе паха вучахсем пулса тăраççĕ. Вăрçă вăхăтĕнче пирĕн республикăра улттă хутчен художествăллă пултарулăх смотрĕсем пулса иртрĕç. Ку çакхи çул, мартпа апрель уйăхĕсенче пулса иртнĕ смотрта чи лайăх драмкружоксем, оркестрсем, юрăпа ансамблĕсем тата уйрăм исполнительсем палăрчĕç. Вĕсенчен Сĕмĕрле комбинатĕнче ĕçлекенсен юрăпа ташă ансамблĕ, Шупашкарти çыхăну работникĕсен хорĕ, Сĕрпÿ районĕнчи Иваново тата Вăрмар районĕнчи Чупай ялĕсенчи колхозниксен хорĕсем республикăри смотрта уйрăмах палла вырăн йышăнчĕç. Куславкка поселокĕнчи Майоровăн сакăр çынлă çемьинчен тăракан струнлă оркестр, Канаш районĕнчи Мăкăр ял Совечĕнчи Горохова учительница çырнă «Хура кунсем» ятлă пьесăна выляса панă драмкружок тата ыттисем те пысăк мухтава тивĕçлĕ пулчĕç.

Хальхи тĕлĕнмелле аслă событисем пулса иртнĕ кунсенче художествăллă пултарулăх халăхăн телейлĕ пурнăçне, унăн çутă ĕмĕчĕсемпе шухăш-кăмăлне палăртса тăрать. Халăх хушшинчен тухнă талантсем, пирĕн Совет Союзĕ историллĕ çĕнтерÿ тунипе хавхаланса, хамăрăн Тăван çĕршыва, большевиксен партине, халăхсен çулпуçне аслă Сталина пĕтĕм чун-чĕререн юратнине кăтартса пама çĕнĕрен-çĕнĕ паха формăсем шыраса тупаççĕ.

Чăваш республикин юбилейне хатĕрленнĕ май, пултарулăх коллективĕсен ĕçĕ вырăнсенче чылай вăйланса кайрĕ. Юбилей кунĕсенче республика столицинче — Шупашкарта халăх искусствин олимпиади пулса иртмелле. Унта, искусство работникĕсемсĕр пуçне, художествăллă пултарулăх коллективĕсенчен кăна пурĕ 700 çын хутшăнмалла. Юбилей кунĕнче Шупашкарта тĕрлĕ коллективсенчен пĕрлештернĕ 300 çынтан ытла тăракан пĕр пысăк хор концерт памалла. Олимпиадăна хутшăнас текен коллективсемпе уйрăм исполнительсем питĕ нумай. Вĕсем пурте хатĕрленеççĕ, хăйсене олимпиадăна хутшăнтарма ыйтса Халăх творчестви çуртне çырусем çыраççĕ.

Çапла халăх юбилей кунĕсенче хăйĕн пултарулăхне анлăн кăтартса пама хатĕрленет. Анчах республикăри çак ĕçе ертсе пыма тивĕçлĕ органсем — чи малтан Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен Управленийĕ олимпиадăна ирттерес ĕç çине питĕ сÿрĕккĕн пăхать. Олимпиадăна хатĕрленсе ирттерес ĕçе ертсе пыма комисси те туман, пĕтĕм ответлăхă Халăх творчествин çуртне çине тÿпернĕ. Кунта вара работниксем те сукпа пĕрех.

Чылай коллективсене олимпиадăна хатĕрленме искусство ĕçне ăста пĕлекен çынсем — композиторсемпе артистсем енчен пулăшу кирлĕ. Пултарулăх коллективĕсене пулăшма паянхи куна çитсе Шупашкартан, искусствăн тава тивĕçлĕ деятелĕ В. П. Воробьев композиторсăр пуçне, урăх пĕри те тухса кайман.

Юбилейччен шутлă кунсем юлчĕç. Анчах искусство ĕçĕсен Управленийĕ олимпиада ирттермелли сметăна халĕ те пăхса тухман. Районсенчен çынсене йышлăн чĕнме шутлаççĕ, анчах вĕсене ăçта, мĕнле вырнаçтарас ыйтăва татса паман. Олимпиадăна камсене чĕнессине те çирĕппĕн палăртса хуман. Халăх творчестви çурчĕ, паллах, хăйĕн пĕчĕк аппаратĕпе çак пысăк ĕçе пĕччен тума пултараймасть ăна пулăшу кирлĕ.

Пултарулăх кружокĕсен репертуарне пуянлатас тĕлĕшпе драматургсем, сăвăçсемпе композиторсем питĕ çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Драматургсем ятлă драмкружоксем валли пьесăсем çырас ĕçе хисеплемеççĕ, вĕсем «аслă сцена» валли кăна çырма тăрăшаççĕ. Уйрăм композиторсен юрă кĕнекисене тата эстрада сборникне Чăвашгизпа типографи вăхăтра кăларса памарĕç. Çаксем пурте ĕнтĕ халăхăн художествăллă пултарулăх ĕçне пысăк чăрмавсем кÿреççĕ.

Вăхăт сахал юлчĕ пулин те, ĕçе çине тăрса тытăнсан, çак пысăк çитменлĕхсене пĕтерме пулать. Республикăри мĕнпур искусство учрежденийĕсемпе работникĕсен олимпиадăна хатĕрленес ĕçе тивĕçлĕ пек хутшăнмалла.

Юбилей кунĕсенче Шупашкарта халăх искусствин олимпиади пулса иртет пулсассăн, район центрĕсемпе колхозсенче те çав чаплă уяв кунне савăнăçлăн ирттермелле. Чаплă ларусемпе пухусем хыççăн вырăнти пултарулăх коллективĕсен вăйĕсемпе концертсем, савăнăçлă вечерсем тумалла.

Тăван республика 25 çул тултарнă кун хамăр халăхăн пултарулăхĕпе талантне пур çĕрте те анлăн кăтартса памалла. Партипе комсомол райкомĕсен, партипе комсомолăн вырăнсенчи организацийĕсен çак ĕçе куллен тимлĕн ертсе пырас пулать, халăхăн чаплă уяв умĕнхи хавхаланăвĕпе çĕкленĕвне умра тăракан хуçалăхпа политика задачисене пурнăçа кĕртнĕ çĕре ярас пулать.

Хамăр автономи уявне пур енĕпе те лайăх хатĕрленсе кĕтсе илсе, орденлă республикăн чысне татах та çÿлерех çĕклер!

ХИСЕП ХĂМИ

Ĕççынни депутачĕсен райсоветĕсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государственнăй плана ăнăçлă тултарнăшăн тата выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстернĕшĕн малта пыракан çак колхозсене республикăри ХИСЕП ХĂМИ çине кĕртнĕ:

ШĂХАСАН РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

23. Куйбышев ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ С. Х. Христофоров юлташ, ферма заведующийĕ М. Я. Яковлев юлташ, колхозра лашасен ĕрчетес ĕçĕн заведующийĕ Г. И. Ильин юлташ) выльăх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 102 процент, майракаллă шултăра выльăх енĕпе 107 процент, сыснасем енĕпе 107 процент, сурăхсем енĕпе 116 процент тултарнă. Обществăллă кĕтÿрен илнĕ çамрăк выльăхсене пĕтĕмпех сыхласа хăварнă.

24. «Свобода» колхоз (председателĕ М. Т. Титов юлташ, лаша ĕрчетес ĕçĕн заведующийĕ М. К. Кузьмин юлташ, ферма заведующийĕ Т. И. Иванов юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 101 процент тултарнă, 10 кĕсререн 8 тиха илнĕ, майракаллă шултăра выльăх енĕпе 125 процент, сыснасем енĕпе 106 процент, сурăхсем енĕпе 102 процент тултарнă. Государствăна çулталăкшăн аш-какай парса татнă.

25. «Активист» колхоз (председателĕ М. Т. Тимофеев юлташ, лаша ĕрчетес ĕçĕн заведующийĕ Ф. П. Александров юлташ, ферма заведующийĕ Ю. Г. Григорьева юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 105 процент, майракаллă шултăра выльăх енĕпе 135 процент, сыснасем енĕпе 149 процент, сурăхсем енĕпе 136 процент тултарнă. 12 кĕсререн 8 тиха илсе çитĕнтернĕ, çамрăк выльăхсене пĕтĕмпех сыхласа хăварнă. Государствăна çулталăкшăн 95 процент аш-какай панă.

26. Чапаев ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ С. М. Миронов юлташ, лаша ĕрчетес ĕçĕн заведующийĕ Н. Т. Яраков юлташ, ферма заведующийĕ Г. Х. Хрисанфов юлташ) майăн 15-мĕшĕ тĕлне 15 кĕсререн 10 тиха, 14 ĕнерен 14 пăру, 6 сысна аминчен 53 çура, 50 сурăхран 53 путек илнĕ. Колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 109 процент, майракаллă шултăра выльăх енĕпе 134 процент, сыснасем енĕпе 112 процент, сурăхсем енĕпе 171 процент тултарнă.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарнă районсем

ВĂРНАР, июнĕн 4-мĕшĕ. (Телеграфпа). Районри колхозсем июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государственнăй плана лашасем енĕпе 101,3 процент, майракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 101,9 процент, сурăхсем енĕпе 134 процент, сыснасем енĕпе 110,8 процент тултарчĕç. Чăваш республики 25 çул тултарнă май илнĕ обязательствăсене пурнăçласшăн кĕрешсе, государствăна выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ парассине вăйлатса пыратпăр.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ БАГРОВ.
Райисполком председателĕ ОСИПОВ.

* * *

КУСЛАВККА, июнĕн 4-мĕшĕ. (Телеграфпа). Куславкка районĕнчи колхозсем июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государственнăй плана лашасем енĕпе 101 процент, майракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 100,4 процент, сыснасем енĕпе 111,3 процент, сурăхсем енĕпе 128,6 процент тултарчĕç.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ КРЮЧКОВ.
Райисполком председателĕ ПРЫТЧЕНКОВ.

* * *

ЧКАЛОВСКОЕ, июнĕн 4-мĕшĕ. (Телеграфпа). Районри колхозсем июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государственнăй плана лашасем енĕпе 100 процент, майракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 100,1 процент, сыснасем енĕпе 124 процент, сурăхсем енĕпе 132 процент тултарчĕç.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ НИКИТИН.
Райисполком председателĕ ГЕРАСИМОВ.

* * *

КАЛИНИНО, июнĕн 4-мĕшĕ. (Телеграфпа). Калинино районĕнчи колхозсем, Чăваш республики 25 çул тултарнине пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илессишĕн кĕрешсе, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государственнăй плана лашасем енĕпе 101,4 процент, майракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 101 процент, сыснасем енĕпе 123 процент, сурăхсем енĕпе 127 процент тултарчĕç.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ НИКИТИН.
Райисполком председателĕ ВАЛЕЕВ.

* * *

МУРКАШ, июнĕн 1-мĕшĕ. (Телеграфпа). Район выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государственнăй плана лашасем енĕпе 100 процент, майракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 105,7 процент, сыснасем енĕпе 136 процент, сурăхсем енĕпе 142 процент тултарчĕ.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ ИЛЬИН.
Райисполком председателĕ ФЕДОРОВ.
Çĕрĕç пайĕн заведующийĕ КОЖАКОВ.

* * *

СĔНТĔР, июнĕн 4-мĕшĕ. (Телеграфпа). Сĕнтĕр районĕнчи колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планă лашасем енĕпе 103 процент, майракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 102 процент, сыснасем енĕпе 112 процент, сурăхсем енĕпе 142 процент тултарчĕç.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ ПЕТРОВ.
Райисполком председателĕ СВЕШНИКОВ.

* * *

ШĂХАСАН, июнĕн 4-мĕшĕ. (Телеграфпа). Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государственнăй плана лашасем енĕпе 101 процент, майракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 103 процент, сыснасем енĕпе 107 процент, сурăхсем енĕпе 142 процент тултартăмăр.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ АРХИПОВ.

* * *

ВĂРМАР, июнĕн 4-мĕшĕ. (Телеграфпа). Пирĕн Хĕрлĕ Çар тăшмана татăклăнах аркатса тăкнă май Сталин юлташ пĕтĕм халăха чĕнсе каланине ответлесе тата Чăваш республики 25 çул тултарнине хатĕрленсе, Вăрмар районĕнчи колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе хăйсем çине илнĕ обязательствăна пурнăçларĕç. Выльăх чĕрлĕх ĕрчетмелли государственнăй плана лашасем енĕпе 102 процент, майракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 104 процент, сыснасем енĕпе 132 процент, сурăхсем енĕпе 138 процент тултарчĕç.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ СМИРНОВ.
Райисполком председателĕ БИКТИМИРОВ.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, июнĕн 4-мĕшĕ. (Телеграфпа). Районри колхозсем июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государственнăй плана лашасем енĕпе 103,5 процент, майракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 106,9 процент, сыснасем енĕпе 137 процент, сурăхсем енĕпе 150 процент тултарчĕç.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ ГЛАДКОВ.

Елчĕк районĕнчи колхозсем çураки планне тултарнă

ЕЛЧĔК, июнĕн 2-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне çуракин государственнăй планне тултарчĕç. 22715 гектар вырăнне 22721 гектар акнă. Планран ирттерсе акас ĕç малалла пырать.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ И. АЛЕКСАНДРОВ.
Райисполком председателĕ З. ОСИПОВ.
Районри çĕрĕç пайĕн заведующийĕ В. МАРКОВ.

ÇĔРТМЕ ТУМА ТЫТĂННА

КАНАШ. (Телефонпа). Районри колхозсем çуртырррисем акса пĕтернĕ хыççăн çĕртме тума пуçларĕç. Паянхи кун тĕлне «Ударник» колхоз 10 гектар, «Красное пламя» колхоз 15 гектар, «Красная Армия» колхоз 16 гектар çĕртме тунă. Районĕпе 160 гектар ытла çĕртме сухаланă. Нумай колхозсем уйхирне тислĕк кăлараççĕ.

В. ЛАПТЕВ,
Районри çĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

П. С. Рыбалко генерал-полковника çар званийĕ — бронетанковăй çарсен Маршалĕ ятне парасси çинчен

Павел Семенович Рыбалко генерал-полковника çар званийĕ—бронетанковăй çарсен Маршалĕ ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 çулхи июнĕн 1-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Танковăй çарсен генерал-полковникне С. И. Богданова çар званийĕ — бронетанковăй çарсен Маршалĕ ятне парасси çинчен

Танковăй çарсен генерал-полковникне Семен Ильич Богданова çар званийĕ — бронетанковăй çарсен Маршалĕ ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 çулхи июнĕн 1-мĕшĕ.

АШШĔПЕ ЫВĂЛĔ — Лука Семеновичпа Владимир Лукич СПАСОВСЕМ

Гварди подполковникĕ Л. С. Спасов нимĕç захватчикĕсене Сталинградра çĕмĕрме пуçланă. Ăна унта амантнă. Анчах та сывалнă хыççăн вăл каллех фронта кайнă. Пĕтĕм Украина витĕр тухса, нимĕçсене малалла хăваласа пырса, вăл Берлина çитсе кĕнĕ. Тăван çĕршыва хÿтĕлесе паттăррăн çапăçнăшăн ăна виçĕ орден, медальсем парса наградăланă.

Лука Семенович Спасов Красноармейски районри Вăтакас Трак ялĕнче çуралса ÿснĕ. Шупашкарта нумайччен ответлă вырăнсенче ĕçлесе пурăннă.

Владимир Лукич Спасов Шупашкарта çуралса ÿснĕ. 1940 çулта вăтам шкултан вĕренсе тухнă. Вăрçă пуçланнă чухне вăл Ленинградра Фрунзе ячĕпе тăракан аслă тинĕс-çар училищинче вĕреннĕ. Ленинграда хÿтĕленĕ. Унтан, училищĕрен вĕренсе тухса, тинĕс-çар флочĕн карапĕ çинче офицер пулнă. Тинĕс çинче хăюллăн та паттăррăн çапăçнăшăн В. Л. Спасов лейтенанта Хĕрлĕ Ялав орденĕ, 1-мĕш степень Отечественнăй вăрçă орденĕ тата медальсем парса наградăланă.

Ÿкерчĕк çинче: сылтăмра — гварди подполковникĕ Л. С. Спасов, сулахайра—лейтенант В. Л. Спасов.

Паймановран нумай вĕренме пулать

Эпир, чăваш халăхĕн ывăлĕсем, Хĕрлĕ Çарта, тăван ялсенчен аякра пулсан та, хамăр республикăри сывăх çынсем мĕнле ĕçленине сăнаса тăратпăр. Нумаях пулмасть эпир апрелĕн 11-мĕшĕнче пичетленсе тухнă «Чăваш Коммуни» хаçата илтĕмĕр. Хаçата ушкăнпа вуласа тухнă хыççăн, Ишлей районĕнчи «Большевик» колхозри паллă конюх Пайманов юлташ 14 çул хушши старши конюх пулса ĕçлесе лашасем ĕрчетмелли плана кашни çулах ирттерсе тултарни çинчен пĕлтĕмĕр.

Пайманов юлташ пирĕн çитĕнÿсемпе хавхаланса тăнă пекех, эпир те республикăри çитĕнÿсемпе чĕререн савăнатпăр. Пайманов Отечественнăй аслă вăрçă пынă вăхăтра мăнтăр та вăйлă лашасем Хĕрлĕ Çара сулсерен парса тăни—питĕ пысăк ĕç.

Фронта лайăх пулăшнăшăн эпир Пайманов юлташа чĕререн тав тăватпăр.

Пайманов юлташ малашне те пысăк çитĕнÿсем тăвасса шанса тăратпăр. Унтан пример илсе, республикăри ытти конюхсене те пысăк çитĕнÿсем тума сунатпăр. Пирĕн шутпа, хăшпĕр конюхсем Пайманов юлташран нумай вĕренме пултараççĕ.

Хĕрлĕ Çарăн пĕр чаçĕнчи чăваш ачисем хушшипе —
Капитан-орденоносец И. ШИШКИН.

Шкулсенчи экзаменсем

ЕТĔРНЕ. (Телефонпа). Вăтам шкултан вĕренсе тухса çитĕнсе çитнине пĕлтерекен аттестат илме районра 42 вĕренекене экзамен пама кĕртнĕ. Чирлĕ пирки экзамена 3 вĕренекен пыраймарĕç. Вырăс чĕлхипе çыру ĕçĕсем тăрăх 6 вĕренекен экзамен парайман. Ку предметпа сăмах вĕççĕн ыйтса пулнă экзаменра 18 вĕренекен «пиллĕк» тата «тăваттă», 15 вĕренекен «виççĕ» илчĕç. Алгебрăпа çыру ĕçĕсем пулчĕç, вĕренекенсем ку предмета çителĕксĕр пĕлни курăнчĕ. Нумай ачасем задачăсене вăхăтра тата тĕрĕс шутласа параймарĕç. 34 вĕренекенрен 4 вĕренекен «пиллĕк», 1 вĕренекен «тăваттă» тата 13 вĕренекен кăна «виççĕ» илнĕ. 13 вĕренекен ĕçне «иккĕ» паллăпа хакланă. Июнĕн 1-мĕшĕнче нимĕç чĕлхипе сăмах вĕççĕн ыйтса экзамен пулчĕ. Ку предметпа 7 вĕренекен «пиллĕк», ыттисем «тăваттă» е «виççĕ» паллăсем илчĕç.

Тамара Глумова, Ольга Андреева, Евгения Щеголева вĕренекенсем ку таранччен пулнă экзаменсенче пур предметсемпе те «пиллĕк» илсе пычĕç. Вĕсем ытти предметсемпе те «пиллĕк» илсе, ылттăн тата кĕмĕл медальсем илме тивĕçлĕ пулассишĕн кĕрешеççĕ.

К. МАРТЯШЕВ,
Районри çутĕç пайĕн заведующийĕ.

РЕСПУБЛИКĂРИ МТС-сем 1945 ÇУЛХИ ИЮНĔН 1-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ĔÇЛЕНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА (процентпа)

МТС-сем	Çулталăкри плана тултарнă	Çураки планне тултарнă	Çĕртме тунă
Вăрнар	51,3	186,4	24,0
Куславкка	49,9	145,0	23,6
Ишлей	44,0	135,0	27,7
Йĕпреç	43,7	152,2	6,8
Вăрмар	43,3	136,3	—
Сĕрпÿ	41,6	142,0	5,2
Канаш	39,6	140,4	—
Чкаловски	38,2	130,5	—
Красноармейски	37,6	114,7	16,3
Улатăр	37,6	127,8	3,7
Калинино	35,6	113,3	11,8
Комсомольски	34,4	108,9	—
Шăхасан	33,2	110,0	4,0
Елчĕк	33,0	123,8	—
Тăвай	33,0	116,3	—
Шупашкар	32,9	101,9	16,6
Элĕк	32,9	103,4	0,9
Хĕрлĕ Чутай	31,0	100,3	—
Сĕмĕрле	30,9	108,0	—
Сурмайдан	30,8	98,1	—
Кувакино	28,8	100,0	—
Первомайски	28,7	108,3	—
Сĕнтĕрвăрри	25,9	87,7	—
Етĕрне	23,8	77,3	3,2
Сиява	21,9	70,5	—
Сĕнтĕр	20,5	63,3	7,6
Октябрьски	17,0	61,3	3,8
Пăрачкав	16,8	56,5	—
Шăмăршă	13,6	41,3	—

Вагонсем юсакан завод май уйăхĕнче мĕнле ĕçленĕ

КАНАШ, июнĕн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Вагонсем юсакан завод уйăхран уйăха лайăхрах ĕçлесе пырать. Производстве программине ирттерсе тултарнăшăн виççĕмĕш уйăх ĕнтĕ ВЦСПС-па Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне тытать. Унсăр пуçне, 1945 çулхи пĕрремĕш кварталта тимĕр-тăмăр пухса памалли плана ăнăçлăн тултарнăшăн завода тепĕр Хĕрлĕ Ялав тата 200 пин тенкĕ преми памалла тунă.

Икĕ Хĕрлĕ Ялавлă завод коллективĕ май уйăхĕнче тата тухăçлăрах ĕçлерĕ. Иртнĕ уйăхри программăна пур цехсем те тултарчĕç. Уйрăмах вагонсем юсакан, вагонсем тăвакан, тимĕр-тăмăр шăратакан тата тимĕрçĕ цехĕсем лайăх ĕçлерĕç. Пĕтĕмпе илсен, завод май уйăхĕнчи хăйĕн программине, вагонсем юсассине 107 процент, чугун çул валли запаслă пайсем хатĕрлессипе 105 процент, чугун шăратассипе 110 процент, вагон кустăрмисем юсассипе 106 процент тултарчĕ.

Вăрçă чарăннипе савăнса тата Сталин юлташ халăха чĕнсе каланине ответлесе, чылай бригадăсемпе стахановецсем питĕ тухăçлă ĕçлерĕç. Слесарьсен Коломиец юлташ ертсе пыракан бригади уйăхри заданине срокран 4 кун малтан пурнăçа кĕртрĕ. Çавăн пекех слесарьсем Фоменко, Марков, Чесов, столярсем Малышев тата Степанов ертсе пыракан бригадисем те май уйăхĕнче питĕ тухăçлă ĕçленĕ.

М. ДМИТРИЕВ,
ВКП(б) Центральный Комитечĕн заводри парторгĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

„Социализм“ колхозри парторганизаци

Шăхальти (Вăрмар районĕ) «Социализм» колхозри пуçламĕш парторганизацинче пурĕ 8 коммунист. Коммунистсем пурте тенĕ пекех ответлă вырăнсенче ĕçлеççĕ.

Коммунистсем колхозра агитмассăллă ĕçе те тивĕçлипе йĕркеленĕ. Агитколлектив 23 агитатортан тăрать, хăйĕн ĕçне план тăрăх туса пырать. Агитаторсене кашнинех уйрăм бригадăсем, участоксем уйăрса панă, вĕсем унта час-часах калаçусем ирттереççĕ. Агитаторсенчен пуçлайĕпе—коммунистсемпе комсомолецсем, вĕсем пурте — колхоз производствинче малта пыракансем. Çураки вăхăтĕнче кăна колхозниксем хушшинче пурĕ 38 калаçу туса ирттернĕ, 3 номер стена хаçачĕ, 11 номер боевой листок кăларнă. Кунсăр пуçне колхозра хаçат вуласа паракансем 12 çын шутланаççĕ.

Партин пуçламĕш организацийĕ ертсе пынипе, колхоз çуракине пур енчен те тĕплĕн хатĕрленнипе кĕтсе илчĕ. Колхоз, «Красные Шигали» колхозпа ăмăртса ĕçлесе, çуракине кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа туса ирттерчĕ. Çуракинче бригадăпа бригада, звенопа звено ăмăртса ĕçлерĕç. Уйрăмăнах 2-мĕш бригада малта пычĕ, вăл колхоз правленин куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Колхозра çĕнĕ хаçатсен витрини пур, тăван земляксен-орденоносецсен сăнĕсене кăларса çакнă. Колхоз правленинче тата ытти çĕрте те çуракине большевикла ирттерме чĕнекен лозунгсем çырса çапнă.

Партин пуçламĕш организацийĕ пуçарнипе çуракине тухас умĕн комсомолецсемпе çамрăксен пĕрлешÿллĕ пухăвĕ пулса иртнĕ. Унта çураки вăхăтĕнчи задачăсем çинчен сÿтсе-явнă. Çураки пынă вăхăтра, ĕçри çитменлĕхсене сиенчех пĕтерес шутпа, 2 производствăллă канашлу туса ирттернĕ тата парторганизаци уçă пухăвĕ пулса иртнĕ.

Коммунистсемпе комсомолецсем çуракинче ытти колхозниксене ĕçре хавхалантарса пычĕç. Парти кандидачĕ А. Мирошкин ертсе пыракан 3-мĕш бригада çуракине чи кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса ирттерчĕ. 8 комсомолец çухаçасем пулса ĕçлерĕç, вĕсем нормăна кулленех 120 процентран кая мар пурнăçласа пычĕç. Отечественнăй вăрçă инвалидĕ Иван Николаев вунпĕкĕ ретлĕ сеялкăпа кулленех 5—6 гектар акса нормăна ытлашшипех тултарса пычĕ.

Çураки вăхăтĕнче партин пуçламĕш организацийĕ ĕçри чи хастарлă 2 комсомолеца парти кандидатне илчĕ, çав вăхăтрах 2 кандидата парти членне куçарчĕ. Комсомолецсен йышĕ те ÿсех пырать.

Партин пуçламĕш организацийĕ яла йывăççем лартса илемлетес тата колхозăн сад-пахчине аталантарас тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем тунă. Ку ыйтăва партин уçă пухăвĕнче сÿтсе-явса, тивĕçлĕ решени йышăннă. Колхозниксем ăна хапăлласах йышăнса, ĕçе пысăк хастарлăхпа тытăнчĕç. Паянхи кун тĕлне ял хушшинчи çулсем хĕррине тата çурхи шывсем çуракан вырăнсене 365 тĕп йăмра лартнă. Колхозăн пĕрлешÿллĕ сад-пахчине 157 тĕп улмуççи, 10 тĕп чие çырли, 120 тĕп хурлăхан тата 1 гектар çине виктори çырли лартнă. Кунсăр пуçне кашни колхозникех хăйĕн килне 7—8 тĕпрен кая мар тĕрлĕ йывăç лартнă. Яла йывăççем лартас тата колхозăн сад-пахчине аталантарас тĕлĕшпе Отечественнăй аслă вăрçă инвалидĕ садовод Яков Ефимов тăрăшса ĕçлет.

Хальхи вăхăтра «Социализм» колхозри пуçламĕш парторганизаци Чăваш республики 25 çул тултарнине çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илессишĕн кĕрешет.

А. БИКТИМИРОВ.
Партин пуçламĕш организацийĕн секретарĕ.

Çулйĕр строительствинчи çирĕмкунлăх

Республика юбилейне лайăх çулйĕрпе кĕтсе илессишĕн

ЕЛЧĔК. (Телефонпа). Çулйĕр строительствин çирĕмкунлăхĕнче тумалли ĕçсен планне райсовет сессийĕнче сÿтсе-явса çирĕплетрĕмĕр. План тăрăх пирĕн районра шоссе çулне 200 метр тăршшĕ çĕнĕрен тумалла, 2 километр тăршшĕ анлăлатмалла тата тепĕр 2 километр тăршшĕ тăпрапа хăйăр сапса çирĕплетмелле. Çавăн валли чулпа хăйăр 800-шер кубометр хатĕрлемелле, 350 кубометр йывăç турттарса тухмалла.

Çулйĕр строительствине чылай колхозсем хутшăнчĕç. Пур колхозсенче те çулйĕр бригадисем тунă. Уйрăмăнах «Осоавиахим», «Новый путь» тата «Знамя» колхозсен çулйĕр бригадисем хастарлăн ĕçлеççĕ. Вĕсем чулпа хăйăр хатĕрлемелли задание пурнăçа кĕртеççĕ те ĕнтĕ. «Осоавиахим» колхозăн Плотников юлташ ертсе пыракан çулйĕр бригади шоссе çулне çĕнĕрен тăвать.

Хальхи вăхăтра районри колхозсенчен çулсем çинче чылай лавсемпе çынсем ĕçлеççĕ. Июнĕн 1-мĕшĕнче, сăмахран, 117 çын лавпа, 612 çын çуран ĕçлерĕ.

Ку таранччен 145 кубометр чул турттарса тухнă. Халĕ Çĕрпÿпе Буинск хушшинчи мăн çул çине чул сараççĕ. Çав вăхăтрах район çулĕсене те юсаççĕ. Елчĕкпе Арамсеево хушшинчи тракт çинче 5 пĕчĕк кĕпер тунă, мăн кĕпере юсанă. Ытти çулсене тăпрапа хăйăр сапса çирĕплетеççĕ.

Анчах «Вторая пятилетка», «Кзыл Элем» тата «Искра» колхозсем çулйĕр ĕçĕсен çирĕмкунлăхне сÿрĕк хутшăнчĕç. Ку колхозсенчи çулйĕр бригадисем çул çинче ĕçленĕ ятне кăна тунă.

З. ОСИПОВ.
Райсовет исполкомĕн председателĕ.

Кандидатсен группи лайăх ĕçлет

ИШЛЕЙ. Партин Сĕньял-Покровски ял Советĕнчи кандидатсен группине нумай пулмасть организациленĕ. Кандидатсен группи хăйĕн ĕçне çирĕп план тăрăх туса пырать. Коммунистсен пухăвĕсем йĕркеллĕ иртеççĕ. Пухура йышăннă решенисене вăхăтра пурнăçласа пыраççĕ. Кунта кашни коммуниста уйрăм ĕç панă. Вăл ĕçсене мĕнле пурнăçласа пынине ялан тĕрĕслесе тăраççĕ, кирлĕ чухне пухусенче сÿтсе-яваççĕ.

Парти членĕ, вăлах кандидатсен группин руководителĕ П. Ефремов юлташ ĕçсыннисем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе лайăх туса пырать. Вăл колхозниксен пухăвĕсенче пулса тĕнчери лару-тăру çинчен тата хамăр çĕршыври çĕнĕ хыпарсене каласа парать. «Сĕньял» колхозра колхозниксен пĕлĕвне ÿстерес тĕлĕшпе уйрăм кружок организациленĕ. Вăл кружока фермăра ĕçлекенсемпе конюхсене тата ытти колхозниксене те анлăн явăçтарнă. Кружокра Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» кĕнеки тăрăх 5 заняти ирттернĕ. Çавăн пекех тата кунта ветеринарипе зоотехника вĕрентессине те лайăх организациленĕ.

Агитацие массăллă ĕçе партире тăманнисене те анлăн явăçтараççĕ. Г. Верензеев учитель колхозниксем хушшинче çутçанталăкпа ăслăлăх ыйтăвĕсем тăрăх темиçе лекципе калаçу туса ирттернĕ.

Çураки вăхăтĕнче коммунистсемпе комсомолецсем уйхирте чи ответлă участоксенче ĕçлерĕç. Кашни бригадăра, звенора агитацие массăллă ĕçе кирлĕ пек туса пычĕç. Коммунистсемпе комсомолецсем пур ĕçре те лайăх ĕçлесе çуракине кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа ирттерме пулăшрĕç.

Халĕ кунта Чăваш республики 25 çул тултарнине уявлама хатĕрленеççĕ. Ку тĕлĕшпе колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче ăнлантаруллă ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Колхоз юбилей кунне ĕçре пысăк çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илме хатĕрленет.

И. ГРИГОРЬЕВ.

Çирĕмкунлăха пур колхозсене те хутшăнтармалла

КАЛИНИНО, июнĕн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри штаб çулйĕр строительствин çирĕмкунлăхĕнчи ĕçсен планне тунă. Çав план тăрăх, районĕпе 2 кĕпер, 80 километр çул юсамалла, 1400 кубометр хăйăр, 564 кубометр йывăç турттармалла. Паянхи куна 22 километр çул юсанă, 120 кубометр хăйăр, 278 кубометр йывăç кÿрсе килнĕ.

Çулйĕр строительствинче «Трактор», Буденный, Каганович тата Папанин ячĕпе тăракан колхозсем лайăх ĕçлеççĕ. Ленин ячĕпе тăракан колхоз 2 пин метр хăма çурнă.

Çирĕмкунлăх пуçланнăранпа эрне иртрĕ. Анчах та «Коминтерн» колхоз çул юсама тытăнман-ха. Айкăш, Ямбахтино, Чăрăш Хирлеп, Юнтапа тата Ассакасси ял Совечĕсенчи колхозсем те çул çине ĕçлеме тухман. Районри штабăн çирĕмкунлăха пур колхозсене те хутшăнтарма тăрăшмалла.

В. ЗАЙЦЕВ.

Профсоюзпа комсомолăн çуллахи кросĕ

Профсоюзпа комсомолăн çуллахи кросне Октябрьски районра пурĕ 2457 çын хутшăнчĕ. Вĕсенчен 424 çынĕ—комсомолец. Кросс лайăх иртрĕ. БГТО значок нормине 1387 çын тата ГТО нормине 744 çын пачĕç.

* * *

Профсоюзпа комсомолăн кросĕ Çĕрпÿ районĕнче те пысăк çĕкленÿпе иртнĕ. Кунта кроса 2.869 çын хутшăннă. 2512 çын БГТО тата ГТО значок нормисене панă.

Ытти районсенче те комсомолецсемпе çамрăксем кроса нумайăн хутшăннă. Сĕнтĕрвăрри районĕнче 3275 çын, Советски районра 2916 çын, Етĕрнере 4183 çын тата Красноармейски районра 1714 çын хутшăннă.

Осоавиахим организацийĕ турăмăр

КАЛИНИНО. Анат Кăканарти «Ударник» колхозра комсомолецсемпе çамрăксем пуçарнипе Осоавиахим организацийĕ турĕç. Халĕ унта пурĕ 15 член тăрать. Осоавиахим членĕсем вăрçă тата ПВХО ĕçне вĕренме тытăнчĕç. Ку тĕлĕшпе ятарласа кружок организациленĕ. Кружока Отечественнăй вăрçă участникĕ В. Никифоров юлташ ертсе пырать.

А. ИВАНОВ.

КОМСОМОЛЕЦСЕНЕ „ВЛКСМ“ ЯТЛĂ ЗНАЧОК ПАРАССИ ÇИНЧЕН

ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XIII-мĕш пленумĕ йышăннă тăрăх, комсомолецсем валли кăкăр çинче çакса çÿреме «ВЛКСМ» ятлă значок тунă. Çав значока пирĕн республикăри комсомол организацийĕсенче çитес кунсенчех пама тытăнаççĕ.

«ВЛКСМ» значока çакса çÿресси кашни комсомолецшăн пысăк чыс пулса тăрать. Значока çакса çÿрени комсомолеца тата лайăхрах ĕçлеме, вĕренме, хăйĕн пĕлĕвне куллен ÿстерсе пыма, партипе правительство решенисене пурнăçлассишĕн тăрăшса ĕçлеме хушать. Значок çамрăк Ленинпа-Сталинпа комсомол ретĕнче тăнине, Тăван çĕршыва, халăха чунтан юратса, халăх телейĕшĕн çапăçма хатĕррине кăтартса парать. Значока алла илсе çакса çÿреме тытăнни кашни комсомолец пурнăçĕнче паллă кун пулса тăрать.

«ВЛКСМ» значока комсомол билетне сыхланă пекех çирĕп сыхласа усрамалла. Значока илни çинчен кашни комсомолеца алă пустараççĕ. Значок çухални е пăсăлни çинчен çийĕнчех ВЛКСМ хула е район комитетне пĕлтермелле. Ун çинчен комсомолăн пуçламĕш организацинче сÿтсе-явмалла. Комсомолран кăларсан, комсомол билечĕпе пĕрле «ВЛКСМ» значока та каялла илеççĕ.

Значоксене ВЛКСМ Обкомĕнчен комсомол райкомĕсемпе хула комитечĕсене вĕсен заявкисем тăрăх ярса параççĕ. Кашни заявкăпа бюрора пăхса тухса çирĕплетмелле. Значоксене тирпейлĕ сыхласа усрассишĕн комсомолăн район тата хула комитечĕсен пĕрремĕш секретарĕсем ответлă пулса тăраççĕ.

«ВЛКСМ» значока комсомолецсен уçă пухăвĕнче параççĕ. Значока кам парассине ВЛКСМ райкомĕн е хула комитечĕн бюровĕнче пăхса тухаççĕ, вĕсене кашнинех ВЛКСМ Обкомĕн бюровĕнче çирĕплетеççĕ. Паллах, çав хисеплĕ те ответлă ĕçе комсомол райкомĕн е хула комитечĕн бюро членĕсем çине, пысăк хуласемпе районсенче пленум членĕсем çине хумалла.

Пуçламĕш организацисенче значоксем памалли пуху хăçан пулассине тата вăл пухура значоксене кам парассине кăтартса çирĕп план тумалла, вăл плана бюрора çирĕплетмелле. Уйрăм комсомолецсем çинчен пуçламĕш организацисенче (член билечĕсене çухатни, комсомолран кăларни, учета тăманни çинчен) йышăннă решенисене халех пăхса тухса çирĕплетмелле.

«ВЛКСМ» значок çинчен калакан положение тата инструкцисемпе ведомостьсене вăхăтра илсе вĕсемпе кашни секретаре, комсомол работникĕсене паллаштармалла. Значок памалли пухусене мĕнле ирттермелли çинчен комсомолăн пуçламĕш организаци секретарĕсене тĕплĕн ăнлантармалла. Çавăнпа пĕрлех комсомолецсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе нумай лайăхлатмалла. Предприятисемпе учрежденисенчи, МТС-семпе колхозсенчи агитколлективсене «ВЛКСМ» значокăн положенийĕ çинчен калаçусемпе докладсем ирттерме хушмалла.

Комсомолăн пуçламĕш организацийĕсенче ВЛКСМ членĕсен списокне туса хатĕрлемелле. Списокра ятсене алфавит йĕркипе çырмалла. Кашни списока комсомолецсен ВЛКСМ райкомĕнчи е хула комитетĕнчи учет карточкисем тăрăх тĕрĕслесе тухмалла, ун хыççăн значоксем памалли ведомоçа тумалла. Ведомоçа комсомол райкомĕн е хула комитечĕн бюровĕнче çирĕплетмелле.

Значоксем памалли пухăва пур комсомолецсен те пымалла. Çавăнпа пĕрлех унта союзра тăман çамрăксене те чĕнмелле. Уççăн сасăласа президиум суйланă хыççăн, пуху пуçлăхĕ ВЛКСМ райкомĕнчен е хула комитетĕнчен килнĕ юлташа сăмах парать. Вăл ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XIII-мĕш пленумĕ комсомол значокĕ çинчен йышăннă постановленин тата значок положенийĕ çинчен каласа парать. Ун хыççăн пуçламĕш организаци секретарĕ комсомолецсене список тăрăх пĕрерĕн-пĕрерĕн президиум сĕтелĕ патне чĕнет. Райкомран килнĕ представитель вĕсен кăкăрĕ çине «ВЛКСМ» значока çакать.

Чирлĕ пирки е урăх сăлтавсемпе пухăва пырайман комсомолецсем значоксене ВЛКСМ райкомĕнче е хула комитетĕнче илеççĕ.

Пуху ирттермелли пÿлĕме кирлĕ пек йĕркелесе хатĕрлемелле. Пуху хыççăн концерт, кино е спектакль кăтартмалла тусан аван пулмалла.

«ВЛКСМ» значока илни комсомолецшăн асра юлмалли чаплă кун пулса тăтăр. Çакă ăна тата лайăхрах, тухăçлăрах ĕçлеме хаваслантартăр.

Л. МИХАЙЛОВ.
ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн секретарĕ.

„Совет Союзĕпе Америка хушшинчи туслăхăн наци совечĕ“ Нью-Йоркра организациленĕ массăллă митинг

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Майăн 31-мĕшĕнче Нью-Йорк хулинче «Совет Союзĕпе Америка хушшинчи туслăхăн наци совечĕ» массăллă митинг туса ирттернĕ. Митинг «Пĕрлешнĕ нацисен салтакĕсене саламлас» ятпа пулса иртнĕ.

Митингра США президенчĕ Трумэн янă çырăва вуласа панă. Çырура çапла каланă: «Пĕтĕмĕшле тăшмана аркатса тăкас тĕлĕшпе çав тери паттăррăн çапăçнă Пĕрлешнĕ нацисен çарĕсенчи арçынсемпе хĕрарăмсене, çавăн пекех тиранире хирĕç çапăçса вилнĕ çынсене тивĕçлипе хаклама пултарнишĕн савăнатăп. Вĕсем пире аслă принципсем çинче çирĕп мир тума май пачĕç. Хальхи вăхăтра пирĕн пурин те çав жертвăсем ахаль ан пулччăр тесе тăрăшмалла, этемлĕхĕн тĕп ирĕклĕхĕсем çинче—сăмахпа тĕн ирĕклĕхĕ çинче, нушалăхпа хăрушлăх пулмалла мар принципсем çинче мир туса хумалла».

Çавăн пекех Стеттиниус янă çырăва вуласа панă, çырура çапла каланă: «Вăрçă йывăрлăхĕнче пĕрлешсе ĕçленине çывăхри çулсенчех ĕмĕрлĕхе çирĕплетесси çинчен тăтăшах астăвас пулать».

СССР-ăн США-ри Посолĕ Громыко юлташ митинг ячĕпе саламлă телеграмма янă. Вăл телеграммăра Германие çĕнтерни Европăри нумай миллион халăхсене фашистла чуралăхран хăтарса, мире юратакан çĕршывсем хушшинче килĕшсе ĕçлемелли условисем хатĕрленине асăрхаттарнă. Вăл çапла каланă: «СССР-па США хушшинче мĕн тери ăнăçлăн пĕрлешсе ĕçленинчен пулас мирĕн çирĕплĕхĕ пит нумай килет. Хальхи вăхăтра Сан-Франциско хулинче Пĕрлешнĕ нацисен конференцийĕ мире сыхласа тăмалли пĕтĕм тĕнчери организацин уставне хатĕрлет. Пĕтĕм тĕнчери пулас организацие усă курса мире сыхласа тăрас ĕçре ответлăха чи малтан фашистла Германие çĕнтернĕ аслă державăсем илĕç. Эпĕ çакна шанса тăратăп: аслă державăсем вăрçăра пĕрлешсе ĕçлени (çакă вăл Германи милитаризмне çĕнтерме май пачĕ) гитлерла тиранине хирĕç пынă кĕрешÿре çĕнтерсе илнĕ мире сыхласа тăрас ĕçре те чакмĕ. Совет Союзĕн халăхĕсем, пĕтĕмĕшле тăшмана çĕнтерес тĕлĕшпе çирĕп тăнă пекех, мир туса хурас тĕлĕшпе те çирĕп пулĕç. США-па СССР халăхĕсем хушшинчи туслăх сывă пултăр!».

ВЦСПС секретарĕ Тарасов юлташ хăйĕн çырăвĕнче митинга Совет Союзĕнчи рабочисен ячĕпе саламланă.

Митингра çавăн пекех США-н суту-илÿ министрĕн Уоллесăн, США-н шалти ĕçсен министрĕн Икесăн тата Элеонора Рузвельтăн саламĕсене вуласа панă.

АРГЕНТИНА ЫЙТĂВĔ ÇИНЕ ХЭЛЛ МĔНЛЕ ПАХНИ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, майăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). «Ньюс уик» журнал çапла пĕлтерет: иртнĕ эрнере Стеттиниус Вашингтонра пулнă чухне Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен государство секретарĕ пулнă Хэлл патне кĕрсе тухнă. Хэлл Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Сан-Францискăри конференцире Аргентина пирки тытса пынă политикине хытă сивленĕ. Журнал пĕлтернĕ тăрăх, Хэлл Стеттиниуса çапла каланă: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем Аргентина тĕлĕшпе тытса пынă хăйсен политикине улăштарни ултавлă та киревсĕр ĕç пулса тăрать, тенĕ.

ТРУМЭН ПРЕЗИДЕНТ КОНГРЕСА ЯНĂ ÇЫРУ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен президенчĕ Трумэн конгреса çыру янă. Вăл çырура çапла каланă: «Паянхи кун наци умĕнче чи малти вырăнта Японие çĕнтерес задача тăрать, мĕншĕн тесен вăрçа пĕр кунлăха кĕскетни те Америка çыннисен пурнăçне упраса хăварнине пĕлтерет».

Трумэн Лăпкă океан çинчи тинĕс-çар флочĕн ĕçĕсем çинчен тĕплĕн каласа панă хыççăн çапла каланă: «Тинĕс-çар флочĕ хальхи вăхăта чылай йывăр задачăсене татса парас тĕлĕшпе, Японипе Окинава çывăхĕнче Япони авиацине вăйсăрлатас, Японие ытларах хупăрласа илес, Европăран вăйсем куçарса каяс, çар куçарассине пулăшас тата татса паракан операцисене хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçлет».

Трумэн Америка çарĕсене Лăпкă океан çинчи вăрçă пыракан вырăнсене куçармалли, Японие хирĕç малалла вăрçмалли тата çав вăрçă валли кирлĕ материалсене США-ра тумалли плансем çинчен пĕлтернĕ. «Японие аркатса тăкас тĕллеве лартакан пирĕн çар политики,—тенĕ Трумэн,—çаксене шута илет: пĕрремĕшĕнчен, Япони çарĕсене вĕсем хальхи вырăнсенче тăнă çĕрте хупăрласа тăрса, вĕсене пайăн-пайăн пĕтерсе тăкасси; иккĕмĕшĕнчен, эпир наступлени туса пыракан фронтăн кашни участокĕнчех ытларах вăй хатĕрлесси; виççĕмĕшĕнчен, сахал çын пĕтнипех çĕнтерес тесе, карапсемпе, самолетсемпе, бронетанковăй вăйсемпе, артиллерипе тата ытти материалсемпе те анлăн усă курасси; тăваттăмĕшĕнчен, тăшмана тинĕсре, сывлăшра тата çĕр çинче ытларах та ытларах хĕстерсе пырасси, тăшмана сывлама вăхăт памасăр, хăйĕн çарĕсене тепĕр хут йĕркелесе хатĕрлеме тата чакса пыракан çар хатĕрĕсене пухса, пирĕн тепĕр атакăна сирсе яма май памалла мар тăвасси.

Японин тинĕс флочĕпе сывлăш флочĕ çинчен тата çĕр çинчи çарĕсен вăйĕ çинчен калакан даннăйсене илсе кăтартса, Трумэн юлашкинчен çапла каланă: США çапăçма хатĕр, Японие хирĕç вăл ăна тăтăклăн çĕнтеричченех вăрçĕ, тенĕ.

Сирипе Ливанри ĕçсем çинчен

ЛОНДОН, июнĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Парижран пĕлтернĕ тăрăх, Францин информаци министерствин çĕнĕ министрĕ ĕнер пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă. Пĕлтерÿре çапла каланă: ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бидо министрсен советне тĕнчери лару-тăру çинчен тата Сирири ĕçсем çинчен каласа панă. Францин Левантри (Сирипе Ливанри) представителĕсене министрсен совечĕ çирĕплетнĕ кăтартусене панă. Çав кăтартусем тăрăх, Франци представителĕсен малалла харкашу тухма пултаракан нимĕнле ĕç те тума юрамасть.

ЛОНДОН, июнĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, де Голль генерал паян Парижра ятарласа пресс-конференци пухнă. Çав пресс-конференцире вăл Левант çĕршывĕсенчи ĕçсем çинчен каласа кăтартнă. Вăл çапла каланă: Левант çĕршывĕсенче пулса иртнĕ ĕçсем хĕвелтухăçĕнчи вăрçă эпизочĕ кăна пулса тăмасçĕ, вăл ĕçсем пĕтĕм халăхсем хушшинчи кризис пулса тăраççĕ. Де Голль генерал хальхи йывăрлăхсен икĕ сăлтавне кăтартса панă: пĕрремĕш сăлтавĕ—Левант çĕршывĕсенчи наци ыйтăвĕ йывăрри, тепĕр сăлтавĕ—унта Великобритани мĕнле позици йышăнса тăни. Де Голль генерал çакна кăтартса панă: Сирипе Ливанра тăракан Англи çарĕсен йышĕ унта тăракан Франци вăйĕсенчен нумай ытларах. Унта йышлă агентура,—тенĕ де Голль,—хумханусем тума тата французсене хирĕç хĕçпăшал тытса çапăçма хĕтĕртсе тăнă. Де Голль генерал малалла çапла каланă: Франци Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи ĕçсем çинчен калаçма хатĕр, анчах та калаçас пулсан мĕнпур араб государствисен ыйтăвĕ çинчен калаçас пулать. Юлашкинчен де Голль генерал çапла каланă: Сирипе Ливан ыйтăвне пĕтĕм халăхсем килĕшнипе кăна татса пама пулать, тенĕ.

СИРИПЕ ЛИВАНРИ ĔÇСЕМ

ЛОНДОН, июнĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио паян кăнтăрла пĕлтернĕ тăрăх, Англин çар карапĕсем Бейрут хули патĕнче чарăннă. Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи флочĕн командующийĕ Теннант адмирал хальхи вăхăтра Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен командующийĕпе Пейджет генералпа канашлать. Дамаск хули хумханусен тĕп центрĕ пулнă. Халĕ унта лăпкă. Пĕр корреспондент хула тăрăх çÿресе тухнă. Вăл Дамаск хулине самаях пысăк сиен кÿни çинчен пĕлтерет. Тупăсемпе пеннине пула, хулара темиçе çĕр çын вилнĕ.

ЛОНДОН, июнĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, акăлчансен танкĕсемпе броньăллă автомобилĕсем Франци çарĕсем тăракан мĕнпур казармăсем тавра вырнаçса тухнă. Акăлчансем килнĕ хыççăнах Франци çарĕсем Дамаск хулинче хăйсем йышăннă позицисене пурне те хăварнă. Çав позицисенчен вĕсем де Голль генерал вăрçă ĕçĕсене пĕтерме хушнă тăрăх тухса кайнă.

Бейрут хулинче пысăк демонстраци пулса иртнĕ. Демонстрацири тĕп лозунг—Сири государствине никама та пăхăнса тăмалла мар тăвасси пулнă. Лондонран илнĕ хыпарсем тăрăх, çав демонстрацире 10.000 çын пулнă.

ЛОНДОН, июнĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет: Англи çарĕсем Алеппо хулине тата тинĕс хĕрринчи ытти хуласене, çавăн пекех тата Дамаск хулине те кĕнĕ. Сирипе Ливанра нумай районсенче осаднăй положени туса хунă.

ИСПАНИПЕ ПОРТУГАЛИ ПРАВИТЕЛЬСТВИСЕМ ГИТЛЕРОВЕЦСЕНЕ ПУЛĂШАÇÇĔ

ЛОНДОН, июнĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Англи хаçачĕсем нумайĕшĕ Бритиш Юнайтед пресс агентствин Стамбулран панă пĕлтерĕвне пичетлесе кăларнă. Пĕлтерÿре çапла каланă: Испание тарнă Риббентроп тата гитлеровецсен ытти паллă 100 пуçлăхĕ Испанире халĕ те ирĕкре çÿреççĕ. Бритиш Юнайтед пресс агентствин Лиссабон хулинчи корреспонденчĕ «Дейли экспресс» хаçатра çапла пичетлесе кăларнă: Португали правительстви нимĕçсен 11 фирмине Португалире çĕнĕрен ĕçлеме пуçлама ирĕк панă, тенĕ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

ЛОНДОН, июнĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешÿллĕ командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа майăн 31-мĕшне çитиччен союзниксен самолечĕсем Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче Японин пĕтĕмпе 2.117.482 тоннă тăракан судине шыва путарнă е самаях вăйлă сиенленĕ. Унсăр пуçне тата союзниксен самолечĕсем Японин 1.220 самолетне пĕтерсе тăкнă. Японецсен позицийĕсем çине 70.000 тонна ытла бомба пăрахнă.

Июнĕн 1-мĕшĕнче Америка самолечĕсем Формоза утравĕ çинчи Такас районĕ çине бомбăсем нумай пăрахнă. Ытти самолетсем японецсен Малайăри, Индо-Китайри, Борнео утравĕ çинчи тата Бонин утравĕсем шутĕнче тăракан Чичидзима утравĕ çинчи объекчĕсене тапăннă.

ВАШИНГТОН, июнĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Лăпкă океан çинчи флочĕн штабĕ çапла пĕлтерет: Окинава утравĕ çинче Америка çарĕсем Сури хулине пĕтĕмĕшпех туртса илнĕ. Америка çарĕсен ытти чаçĕсем Кокуба шывĕ урлă каçнă.

ЛОНДОН, июнĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешÿллĕ командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: Америка çарĕсем Минданао утравĕ çинчи Давао хулинчен 75 миля кăнтăртарахра ларакан Луаен пунктне пырса аннă. Вĕсене анма авиаци тата флот пулăшнă. Японецсем начар хирĕç тăнă. Америка çарĕсем утрав çинче хăвăрт шалалла кĕрсе кайнă.

Америка самолечĕсем Целебес тата Гальмагера утравĕсем çинчи японецсен позицийĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Американецсен йывăр бомбардировщикĕсем Японин Формоза утравĕ çинчи Тайхоку хулинче тăракан штабĕ çине 370 тонна бомба пăрахнă.

ВАШИНГТОН, июнĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Лăпкă океан çинчи флочĕн штабĕ çапла пĕлтерет: американецсен 10-мĕш армийĕн чаçĕсем Рюкю утравĕсен шутĕнче тăракан Окинава утравĕн кăнтăр пайĕнче малалла кайнă.

Июнĕн 1-мĕшĕпе 2-мĕшĕнче Америка самолечĕсем, авианосецсем çинчен вĕçсе улăхса, Японин вăрçă объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

КĂНТĂР-ХĔВЕЛТУХĂÇ АЗИРЕ АКĂЛЧАНСЕМ ÇĔНĔ АРМИ ТУНĂ

ЛОНДОН, июнĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Кăнтăр-хĕвелтухăç Азире акăлчансем çĕнĕ арми, 12-мĕш арми туса хунă. Вăл армин командующийĕ Монтегю Стопфорд генерал-лейтенант пулать.

Çĕнĕ арми Бирма столицинче—Рангун хулинче тăмалла пулать, вăл союзниксен Кăнтăр-хĕвелтухăç Азири çĕр çинчи çарĕсен пĕр пайĕ пулмалла.

БУДАПЕШТРА СОЮЗНИКСЕН КОНТРОЛЬ КОМИССИЙĔНЧЕ ÇĔНТЕРÿ ЯЧĔПЕ ПУЛСА ИРТНĔ ЙЫШĂНУ

БУДАПЕШТ, июнĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Майăн 31-мĕшĕнче Союзниксен Контроль Комиссийĕн председателĕ Совет Союзĕн Маршалĕ К. Е. Ворошилов гитлерла Германие çĕнтернĕ ятпа йышăну туса ирттернĕ.

ИТАЛИ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ УРĂХЛАТСА ÇĔНЕТМЕ ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

РИМ, июнĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Правительствăна урăхлатса çĕнетес ыйтупа Рим хулинче политикăллă партисен руководителĕсен канашлăвĕсем пулса иртеççĕ.

Майăн 30-мĕшĕнче христиансен демократиллĕ партийĕн руководстви ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура июлĕн 9-мĕшĕнче партин нациллĕ совечĕн пухăвне пухма йышăннă. Унта Çурçĕр Италири провинци организацийĕсен секретарĕсем те пулмалла. Вăл пуху партин нациллĕ пĕрремĕш съездне хатĕрлемелле, вăл съездра «демократиллĕ çĕнĕ государство тăвасси çинчен тата государство тытăмĕн форми çинчен» сÿтсе-явмалла.

Компарти лидерĕ Тольятти тата социалистсен партийĕн лидерĕ Ненни пичет представителĕсене çапла каласа панă: эпир Наци ирĕклĕхĕн Центральный комитечĕн ларăвне халех пухма ыйтатпăр, тенĕ. «Ĕçлĕх партийĕн» руководстви пичет представителĕсене каласа панă тăрăх, вăл парти Наци ирĕклĕхĕн комитечĕнче пĕрлĕх тăвасшăн тăрăшать.

КĔСКЕН

▲ Югославири Скопле хулинче фашистла преступниксене суд тума пуçланă. Айăпланакансем çаксем: Раев, Китинчев, Чкартов тата Джузелев.

Вĕсем пурте Югославире фашистла пропаганда тунă, гестапо аллипе Югослави патриочĕсене тыта-тыта панă, карательнăй отрядсем тăвас тĕлĕшпе хытă ĕçленĕ.

▲ Болгарири Пловдив хулинче халăх милицийĕн органĕсем вăрттăн ĕçлесе тăнă фашистсен организацине тупнă. Организаци членĕсене пурне те тытса хупнă та суда панă. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—99, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, издательство конторин — 0—23.

НТ 00353 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. тираж 16.000